Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

54 (8120) № * Шăмат кун, 2013 çулхи утă (июль) уйăхĕн 27-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Каçалăк сарăлсах пырать

*Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсемшĕн вăрăма тăсăлнă шăрăх кунсем кăçал вырмана иртерех тухма çул уçрĕç. Çавна май хуçалăхсенче агротехникăна пăхăнса ĕçленине, хире юсавлă техникăпа тухнине, ĕç йĕркелĕвне тивĕçлĕ шайра пурнăçланине паян кашниех хăйĕн тĕслĕхĕнче курса кӳршĕсеннипе танлаштарма пултарать.*

*Кăçалхи вырмара районти çĕр ĕçченĕн 14725 гектар çинчи тырă-пулăна пуçтарса кĕртмелле. Кунта технологие пăхăнсе тирпейлĕ ĕçлени – çухатусене май пур таран пĕчĕклетмелли çул-йĕр. Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн йĕтемĕ çинче çĕнĕ тырăна аласа-тиĕтсе кĕлете кĕртессипе вăй хуракансен пĕр ушкăнне куратăр. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): Вера Малеева, Валентина Соловьева, Лидия Сорокина, Ольга Кузьмина, Лира Бурцева.*

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)

Вырма – 2013



Правительствăра

## Яллă районсенче – чрезвычайлă лару-тăру

**Çанталăк чылай хушă типĕ тăнăран Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. Игнатьев хушăвĕпе утă уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа республикăн яллă районĕсенче чрезвычайлă лару-тăру режимне туса хунă. Çав шутра Муркаш районĕнче те.**

Патшалăх Тури Атăл метеорологи станци управленийĕн филиалĕ – Чăваш Енĕн патшалăх тĕп метеостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх кăçал ака уйăхĕ яланхинчен типĕрех тăнă. Çу уйăхĕнче те, каярахпа та çумăр республика территорийĕнче сахалрах çунă. Шăрăх çанталăка пула çĕр типсе кайнипе нумай çĕрте ял хуçалăх культурисем çителĕклĕ аталанса çитеймен. Çавăнпа та хушура ЧР Ял хуçалăх тата Финанс министерствисене, Чрезвычайлă лару-тăру патшалăх комитетне, Экономика аталанăвĕн министерствине ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсемпе агропромышленноç комплексĕнчи организацисене тăкаксене патшалăх енчен, çав шутра республика бюджечĕнчен те, саплаштарма сĕнӳсем тăратма ыйтнă.

ЧР Ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕпе типĕ çанталăк уйрăмах Патăрьел, Комсомольски, Шăмăршă, Елчĕк районĕсене пысăк сăтăр тунă. Вĕсем 250 миллион ытла тенĕлĕх тăкак тӳсеççĕ. Çанталăк республикăри ял хуçалăхне пĕтĕмĕшле кӳнĕ сиен 700 миллион ытла тенкĕлĕх.

Симĕс ĕç çи – 2013

## Камăн çителĕклĕ, камăн...

Утă уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне районти ял хуçалăх предприятийĕсем выльăх апатне пĕтĕмпе çакăн чухлĕ хатĕрлеме пултарнă: 6324 тонна (122 процент) утă, 11500 тонна (77 процент) сенаж, 2250 тонна (17 процент) силос.

Чкалов яч. хис., Чапаев яч. хис., «Герой» хуçалăхсем утăна планпа палăртнă чухлех хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ пулсан, Е. Андреев яч. хис. (1443 тонна е 577 процент), «Свобода» (675 тонна е 107 процент), Суворов яч. хис. (1150 тонна е 256 процент) хуçалăхсем ĕç кăтартăвĕсене планпа пăхнинчен самай иртерме пултарнă. Сенаж янтăлассине те хальлĕхе «Восток», «Герой», «Оринино», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем çеç планпа пăхнă чухлĕ е ытларах та пурнăçлама хевте çитернĕ.

## Çĕр улми кăлараççĕ

Районта выльăх апачĕ хатĕрлессипе пĕрлех вырма вăй илсе пырать. Малашлăха пăхакан ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем паян ир пулакан çĕр улми, пахча çимĕç пухса кĕртессипе те ĕçлеççĕ.

Ĕнерхи куна «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 4 гектар çинчен 72 тонна çĕр улми кăларса реализациленĕ. А. Толстовпа А. Матвеев хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 2 гектар (35 тонна) купăста касса сутма ĕлкĕрнĕ.

А. БЕЛОВ.

## Çыхăну çирĕпленĕ

Ĕçлĕ визит

***Нумаях пулмасть ĕçлĕ визитпа кӳршĕллĕ Етĕрне районĕнче пирĕн район делегацийĕ пулнă. Ăна Раççейри Пенсионерсен союзĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн председателĕ А. Скворцов ертсе пынă. Делегаци шутĕнче район администрацийĕн представителĕсем, районти мĕн пур общество организацийĕсен ертӳçисем пулнă.***

Делегацие Ас тăвăмпа Мухтав палăкĕ умĕнче Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă политика енĕпе çумĕ А. Иванова, Раççейри Пенсионерсен союзĕн Етĕрне районĕнчи уйрăмĕн председателĕ, тĕл пулу пуçаруçи В. Семяхин, районти общество организацийĕсен ертӳçисем кĕтсе илнĕ.

Етĕрнери тĕп библиотека директорĕ Н. Долгова Етĕрне хулин историйĕпе, паллă вырăнсемпе паллаштарнă, хулапа районăн паллă çыннисем çинчен каласа панă.

Кайран Муркашсем Раççейри Пенсионерсен союзĕн Етĕрне районĕнчи уйрăмĕн офисĕнче пулса курнă. Кунта вĕсене «Çăлкуç» вокал ансамблĕ çăкăр-тăварпа тата хăна юррипе кĕтсе илнĕ. «Çавра сĕтел» пынă май Пенсионерсен союзĕн икĕ районти уйрăмĕ малашне пĕр-пĕринпе çыхăну тытса ĕçлесси пирки килĕшĕве алă пуснă.

Юлашкинчен делегаци членĕсем хулари паллă вырăнсемпе паллашнă: Афган вăрçин участникĕсене, политика репрессийĕсене пула шар курнисене асăнса лартнă палăксем умĕнче, Етĕрнери Таса Троица чиркĕвĕнче тата вырсарни шкулĕнче, художествăпа краеведени тата Н.Д. Мордвинов музейĕсенче пулса курнă.

Кӳршĕ районта пулнисем çул çӳревпе тата Етĕрнесем сĕннĕ культура программипе кăмăллă юлнă. Икĕ район хушшинчи çыхăну малашне те тăсăлĕ.

Е. КАЗАКОВА.

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Чи лайăх 100 хуçалăх шутĕнче

Çулленех Чăваш Республикин унитарлă «Агро-Инновация» хысна учрежденийĕн специалисчĕсем агропромышленноç комплексĕн предприятийĕсен рейтингне иртерсе республикăри чи лайăх 100 хуçалăха – «Агро-100» клуб членĕсене – палăртаççĕ. 2012 çул итогĕсемпе республикăра тăнăç та йĕркелĕ аталанса пыракан хуçалăхсен шутне кĕме районти çак хуçалăхсем тивĕçнĕ:
– «Путь Ильича» агрофирма» ООО – 38-мĕш вырăн;
– Суворов яч. хис. СХПК – 56-мĕш вырăн;
– «Оринино» СПК – 73-мĕш вырăн;
– Ильич яч. хис. СХПК – 97-мĕш вырăн;
– Чкалов яч. хис. СХПК – 98-мĕш вырăн.

## Вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн

Шкулсенче 2013 – 2014 вĕренӳ çулĕ пуçланиччен вăхăт нумаях юлмасть. Хатĕрленӳ ĕçĕсем вĕренӳ учрежденийĕсенчен ытларахăшĕнче вĕçленсе пыраççĕ.

Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕррине палăртма июлĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса августăн 2-мĕшĕччен районти вĕренӳ учрежденийĕсен 45 объектĕнче тĕрĕслевсем иртерме палăртнă. Çавна валли йышăну комиссийĕсем 2 йĕркеленĕ. Вĕсен шутĕнче район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн, районти пушар надзорĕн, Роспотребнадзор управленийĕн территори пайĕн, Ростехнадзорăн экологи тата технологи надзорĕн управленийĕн, районти шалти ĕçсен пайĕн представителĕсем.

## Тăлăхсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатаççĕ

Тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасене патшалăх тимлĕхсĕр хăвармасть. Çакă чи малтанах вĕсене пурăнма кирлĕ йĕркеллĕ çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе, юсав ĕçĕсем пурнăçласа парассипе çыхăннă.

Кăçалхи виççĕмĕш кварталта районта тăлăх тата ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасен харпăрлăхĕнчи пурăнмалли 3 çуртра юсав ĕçĕсем туса иртерме палăртнă. Çуртсене пурăнма юрăхлă, законодательствăпа килĕшӳллĕн санитари техника нормисене тивĕçтерекен тăвассипе юсав ĕçĕсене «Моргаушавтотехсервис» ООО строителĕсем пурнăçлĕç.

## Пуçарулăх ытларах пултăр

Вырăнти пурнăç мĕнле пуласси ытларах кунта пурăнакансенчен, вĕсен активлăхĕпе пуçарулăхĕнчен килет. Çапла шутлать Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Фомин. Вырăнти депутатсемпе ял старостисене кунта чи тивĕçлисене суйлама тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тесен шăпах вĕсем тăраççĕ те ĕнтĕ ял тăрăхĕн администрацийĕпе вырăнта пурăнакансем хушшинчи çыхăну сыпăкĕнче. Çакăнта Василий Илугин, Алевтина Илугина, Николай Чернов, Валентина Краснова, Олег Аргандеев пирки чи ырă сăмахсем каламалла.

## Учительсем, сире кĕтеççĕ

Çак вăхăта республикăри вĕренӳ учрежденийĕсенче 500 ытла вакансиш пулсан, районта вакансисен хисепĕ 12. Шкулсенче ĕçлеме ытларах физика, математика, истори, биологи предмечĕсене вĕрентекенсем çитмеççĕ.

## Ĕçе вырнаçма пулăшаççĕ

Профессипе техника училищисенчен вĕренсе тухакансене ĕç вырăнĕ тупма майсем туса парас тĕллевпе ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин Чăваш Енри уйрăмĕн порталĕнче «Работодателям» пайра «Резюме выпускников» вырнаçтарнă. Унта професси пĕлĕвĕ илнĕ выпускниксен даннăйĕсен банкĕ пур. Кунти информацие усă курса ĕç паракансем хăйсене кирлĕ специалистсене суйласа илме, вĕсемпе тӳрремĕн çыхăнма пултараççĕ. Информацие вĕçĕмех çĕнетсе тăраççĕ. Çакă ĕç паракансемшĕн те, вĕренсе тухнисемшĕн те меллĕ.

В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.

# Патшалăх çынсене авариллĕ çурт-йĕртен тухма пулăшать

## Пурнăç условийĕ лайăхланать

**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисен йышăвĕсемпе килĕшӳллĕн авариллĕ çурт-йĕрти çынсене хăтлă хваттерсемпе тивĕçтермелле. Ку енĕпе республикăра «Чăваш Республика территорийĕнчи авариллĕ çурт-йĕр фондĕнчи граждансене куçарасси» программа çирĕплетнĕ. Çакна тĕпе хурса район территорийĕнче те тĕллевлĕ ĕç пурнăçланать, халĕ 2013 – 2015 çулсенче вăя кĕртмелли ĕç-хĕле палăртнă.**

Район администрацийĕн капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх кăçал çынсене авариллĕ çурт-йĕртен куçарассипе пурнăçлама палăртнă ĕç-хĕл çапларах. Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри нумай хваттерлĕ авариллĕ çурт-йĕрти 42 çыннăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшмалла. Ятарлă комисси çирĕплетнипе çак шута Мăн Сĕнтĕрти Ленин урамĕнчи 79-мĕш тата 93-мĕш çуртсем, Советская урамри 22-мĕш çурт, Новая урамри 15-мĕш çурт, çавăн пекех Муркашри Гагарин урамĕнчи 12-мĕш çурт кĕреççĕ.

Çапла вара уйрăмах йывăр лару-тăрăва лекнисене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтермелле. Çак ĕç йăлтах патшалăх шучĕпе пурнăçланать. Социаллă нормăпа килĕшӳллĕн çӳлерех асăннă йыш валли 878, 9 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли лаптăк кирлĕ. Ку ĕçе йĕркелеме пĕтĕмпе 19405720 тенкĕ уйăрма палăртнă. Вăл шутран Патшалăх корпорацийĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлассин фондĕнчен – 12476170,26 тенкĕ, Раççей Федераци субъектĕнчи бюджетран – 6929549,74 тенкĕ. Çитес çул пурнăçлама палăртнă ĕç-хĕл калăпăшĕ татах та пысăкрах.

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан хисеплĕ йыш патшалăх уйăракан пысăк пулăшăва туйма пултарчĕ. Крючковсем маларах Мăн Сĕнтĕрти Советская урамри авариллĕ 10-мĕш çуртра пурăнатчĕç, халĕ – 15-мĕш хăтлă çуртра.

– Патшалăх шайĕнче çакăн пек программа ĕçлени пире, йывăр лару-тăрăва лекнисене, çурт-йĕр условийĕсене йĕркелеме пулăшни питĕ вырăнлă. Апла пулсан правительство çынсемшĕн тăрăшни куç кĕрет. Çавăн пекех манăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхне Анатолий Лаптева та тав сăмахĕ калас килет. Паллах, кашни çыншăн çурт-йĕр ыйтăвĕ тĕп вырăнта тăрать, – терĕ Валентина Анатольевна хваттерпе кăмăллă пулнине палăртса.

Валентина Крючкова улттăмĕш çул ĕçпе вăрçă ветеранĕсен Каршлăхри интернат çуртĕнче вăй хурать. Социаллă ĕçчен кунти ватă çынсене тĕрлĕ экскурсисемпе концертсене илсе тухать тата ытти мероприятие хутшăнма пулăшать. Çапла вара вĕсен кулленхи пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнать. Кунта сахал мар тимлеме тивет. Çапах та ватă çынсен ырă сăмахĕ – пуринчен те кăмăллă. Унччен малараx пултаруллă хĕрарăм ачасен çаканти сиплев учрежденийĕнче тăрăшнă. Çапла вара кунта 1990 çултанпа тăрăшать.

Валентина Анатольевна юрă-кĕвĕ ăсти пулнăран чылай çул ĕнтĕ «Янаш» ушкăнпа тĕрлĕ концерта çӳрет. Ку туртăм амăшĕнчен ачисене те куçнă. Валерăпа Екатерина тĕпренчĕкĕсем вара унăн пурнăçĕн тĕллевĕ пулса тăраççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**



# «Эй, тӳпе, шĕлепкӳне хыв!»

## Вырăссен пĕрремĕш «Чайкки»

***Валентина Терешкова иртнĕ çул хăйĕн 75 çулхи юбилейне паллă турĕ. 60 çул каялла июнь уйăхĕнче вара ун пирки пĕтĕм тĕнче пĕлнĕ. Тĕнчери пĕрремĕш хĕрарăм космонавтăн вĕçевĕ 3 талăк тăсăлнă. Терешковăн «Чайка» чĕнӳ сигналĕ ĕмĕрлĕх унпа пĕрле юлнă.***

Планетăна, Уйăх çинчи кратера, вуншар хула урамне ун ятне панă. Унăн палăкĕсене çĕкленĕ, ун ячĕпе юрăсем хывнă. Вăл халĕ те пĕрремĕш пулса юлать. Ун хыççăн тĕнче уçлăхне çĕкленекен хĕрарăмсем пĕри те вĕçевре пĕччен, арçын космонавтсăр пулман.

Старт умĕн Терешкова Маяковский сăмахĕсемпе çапла каланă: «Эй, тӳпе, шĕлепкӳне хыв!». Тӳпе хывнă та.

Валентина Владимировна Раççей çар историйĕнче пĕрремĕш тата пĕртен-пĕр хĕрарăм генерал. Анчах та хăйĕн мундирне вăл уявсенче – майăн 9-мĕшĕнче, февралĕн 23-мĕшĕнче тата апрелĕн 12-мĕшĕнче – Космонавтика кунĕнче – кăна тăхăнать иккен.



Унăн общество тата патшалăх структурисенчи ĕç опычĕ пысăк: 20 çула яхăн хĕрарăмсен общество организацийĕсенче тăрăшнă, чикĕлеш енчи çĕр-шывсемпе килĕштерсе ĕçлессин обществин союзне ертсе пынă, чылай хут ăна СССР Аслă Канашĕн депутатне, Раççей парламентне суйланă.

Вĕçев хыççăн 5 уйăхран – 1963 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче вăл пирĕн ентеше – Андриян Николаев космонавта – качча тухнă. Кун пек «çăлтăр мăшăрĕ» тĕнчере урăх пулман. 3-мĕш номерлĕ космонавт А. Николаев ун чухне космосра чи нумай вăхăт (4 талăк) пулнă, ăна пĕрремĕш хут креслоран уйрăлса «ирĕклĕ вĕçеве» тухма ирĕк панă. Çитменнине космонавтсен командинче Андриян Григорьевич авланман арçынсенчен пĕртен-пĕри пулнă.

Çулталăк иртсен Андриянпа Валентинăн хĕр çуралнă. Елена питĕ лайăх паллăсемпе шкултан, медиститутран вĕренсе тухнă. Халĕ вăл качча тухнă, унăн Алеша ывăл ӳсет.

Терешковăн пархатарлă ĕçне СССР-па Раççей кăна мар, ытти çĕр-шывсен пысăк наградисене те парса палăртнă. Вăл – хăй çуралса ӳснĕ Ярославль хулин тата тĕнчери ытти чылай хуласен хисеплĕ гражданинĕ.

## Право

# Саккунсенчи улшăнусем

***Çак кунсенче Раççей Президенчĕ Владимир Путин право енĕпе çыхăннă хăш-пĕр саккунсене кĕртекен улшăнусене алă пусса çирĕплетнĕ. Саккунсене алă луснă – вĕсене пурнăçлас пулать.***

**«ТИПĔ САККУНА» ПĂРАХĂÇЛАМАН**

Административлă майпа право йĕркисене пăсни пирки калакан кодекса кĕртекен улшăнусене водитель урă е ӳсĕр пулнине палăртмалли приборăн йăнăшлăх шайне (погрешность) уçăмлатассипе çыхăннă. Саккун вăя кĕрсен (сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса) вăл висе сывласа кăларакан 1 литр сывлăшра 0,16 миллигрампа танлашĕ. Сăмах кунта юнри этил спирчĕн шайне висмелли приборсен йăнăшлăх шайĕ пирки пырать. Спирт çине куçарсан вăл 1 литр пусне 0,32 грампа е 0,32 промиллепе танлашать.

Анчах приборăн йăнăшлăх шайĕ çине шанма тăмасть. Кĕрнеклĕ арçын руль умне ларас умĕн пĕр кĕленче сăра ĕçрĕ пулсан та сывласа кăларакан 1 литр сывлăшра асăннă висе 0,3 миллигрампа танлашĕ. Ку вăл нормăпа пăхнинчен икĕ хут нумайрах. Апла пулсан водительсем валли «типĕ саккун» вăйрах юлать.

Айăплав тĕсĕсене пĕрлештересси пирки те асăнмалла. Руль умне ӳсĕрле ларнă водителе 2 çуллăха удостоверенисĕр хăварĕç кăна мар, кунпа пĕрлех унăн бюджета 30 пин тенкĕ тӳлеме тивĕ. Иккĕмĕш хут çаклансан 50 пин тенкĕ штрафлĕç тата удостоверенисĕр хăвармалли вăхăта татах 3 çуллăха тăсĕç.

Арестлемелли чи пĕчĕк сроксене пусласа палăртнă. Ӳсĕрле тата удостоверенисĕр çула тухнă пулсан (удостоверенисĕр хăварнă е кирлĕ категори çук) 10 – 15 талăклăха арестлеме пултараççĕ.

**Сăмах май.** Белоруссире тепĕр 3 уйăхран çĕнĕ саккун вăя кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн водитель çулталăк хушшинче иккĕмĕш хут ӳсĕрле çакланчĕ пулсан унăн автомашинине конфискацилеме пăхнă. Пĕрремĕш хутĕнче вара штраф висĕ 2 пин долларпа танлашать. Ку йĕркесем Белоруссри çулĕсемпе çӳрекен Раççей водителĕсене те пырса тивеççĕ.

**ÇĔР ПИРКИ**

Малашне вилекен çыннăн еткерĕсем çук пулсан унăн çĕр участокĕпе çурт-йĕрĕ те федераци е куçман пурлăх вырнаçнă çĕрти муниципалитет харпăрлăхне куçĕ. Унччен вара кун пек нормăсем çурт-йĕр тĕлĕшпе кăна пулнă. Хуçасăр юлнă çĕр лаптăкĕ çинче вара хытхурапа çум курăк кăна ашкăрса ларнă.

## Укçа-тенкĕ

# 750 пин тенкĕ таран – йӳнĕрехпе

**РФ Суту-илӳ министерстви июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса автомашинăсем туянма кредит çăмăлрах майпа уйăрассине пурнăçа кĕртме тытăннă.**

Программăна лекес тесен автомашина хакĕ 750 пин тенкĕрен, унăн пĕтĕмĕшле йывăрăшĕ 3,5 тоннăран ытла пулмалла мар. Малтан тӳлесе хумалли висе – 15 процентран кая мар. Килĕшӳ тапхăрĕ – 3 çул таран. Автомашина Раççейре туса кăларни пулмалла.

Программа тĕллевĕ – хамăр çĕр-шыври автомобиль промышленноçне пулăшасси. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çăмăллатнă кредитпа тивĕçтерекен банксен адресĕсене пĕлме май пулĕ.

Хальхи вăхăтра Раççей автопромĕ йывăр лару-тăрура: кăçалхи январь – июнь уйăхĕсенче 1,3 млн çĕнĕ автомашина сутнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 6,6 процент сахалрах.

Программăна хутшăнса çак маркăллă автомашинăсене туянма май пулĕ: «Шевролен» чылай моделĕсене – «Нива», «Авео», «Кобальт» тата «Круизăн» хăшпĕр комплектацийĕсене. Çавăн пекех списокра «Фокус», «Астра», «Фабия», «Солярис», «Рио», «Сида», «Лансер», «Королла», «Мазда». Паллă ĕнтĕ, ку списокрах УАЗ, ЗАЗ LADA маркăллă автомашинăсем пур.

## Ачасем валли

# «СПАСАЙКИН» – ача-пăча журналĕ

2005 çулхи март уйăхĕнче ачасем валли кăларакан «СПАСАЙКИН» журналăн пĕрремĕш номерĕ кун çути курнă. Ăна 6 – 12 çулхи ачасем валли пичетлесе кăлараççĕ.

Журналта пичетленекен материалсен тĕп теми – ачасен хăрушсăрлăхне тивĕçтересси, террорист хăрушлăхĕ пулас пулсан, техногенлă катастрофăсемпе чрезвычайлă ытти лару-тăру вăхăтĕнче хăйсене мĕнле тытмаллине вĕрентесси, патриот воспитанийĕ парасси. Çавна май тĕп рубрикăсем – «Супер-спасатель», «Телефон 01», «Маленький гражданин России», «Дельные ручки», «Полезно знать родителям», «Внимание, конкурс!», «Какой чудесный день!», «В походе», «Советы Спасайкина», «Мир флоры России», «Мир фауны России», «Юный патриот», «Юный эколог», «Ай-болит» т. ыт. те.

Журнал А-4 форматпа уйăхне 1 хут пичетленсе тухать. «Раççей почтин» каталогĕнчи индексĕсем: 60068 (çулталăклăха çырăнма) тата 60067 (6 уйăхлăха çырăнма).

Ачасем хăйсен журналĕпе çирĕп туслашасса шанас килет.

# Каçалăк сарăлсах пырать

**Вырма – 2013**





**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Утă уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне районти ытларах хуçалăх вырмана тухрĕ. Пĕрлехи вăйпа вĕсем 1188 гектар çинчи тырă-пулăна пуçтарса та кĕртрĕç. Районти вăтам тухăç хальлĕхе гектар пуçне 21 центнерпа танлашать.

Асăннă кун тĕлне хирсенче пĕтĕмпе 22 «хир карапĕ» ĕçленĕ. Вырма ĕçĕсем, тĕпрен илсен, кĕрхи культурăсен пуссисенче сарăлнă. Кĕртрисен уйрăмах пысăк лаптăкĕсем Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Ударник», «ВаСем» хуçалăхсенче.

«Герой» хуçалăх ĕçченĕсем те халĕ талăкĕпех тырă-пулă пухса кĕртес ĕçре. Паянхи фоторепортажа эпир хуçалăхăн йĕтемĕ çинче хатĕрлерĕмĕр. Кооператив ертӳçи Г. Иванова та кунтах.

– Паян уяр кунăн кашни саманчĕпе туллин усă курса ыранхи куна пăхса ĕçлеме тăрăшатпăр. Туса панă ĕç условийĕсемпе килĕшсе «хир карапĕсемпе» ĕçлекенсем те, хиртен йĕтем çине тырă турттаракансем те, çĕнĕ тырăна аласа типĕтекенсем те пĕр тĕллевлĕ ĕçлеççĕ. Тĕллевĕ вара – вырмана сахалрах çухатусемпе кĕске вăхăтра иртересси, – терĕ тырă алакансемпе тĕл пулнă чухне Галина Никитична.

Ĕç кунĕ пуçланатчĕ кăна та кĕртрисене вырса пĕтернĕ хыççăн çуртрисен пуссисене кĕрсе кайма хатĕрленнĕ «хир карапĕсем» кĕске хушăрах 804 гектартан 120 гектарне яхăн вырса кĕртнĕччĕ ĕнтĕ. Хĕвел çӳлелле улăхнă вăхăтра «Дон-1500» тата «Акрос-530» комбайнсене вĕсен хуçисем А. Бычковпа А. Карпов тата Е. Ершовпа А. Иванов черетлĕ ĕç кунне хатĕрлетчĕç. «Сывлăм типессе çеç кĕтетпĕр», – терĕç вĕсем вырма ĕçĕсем калкал пуçланнине палăртса.

Эпĕ иртсе пынă чух хиртен йĕтем айне тырă турттаракан В. Федоровпа В. Борзаев та хăйсен автомашинисемпе техника тĕрĕслевĕ иртеретчĕç.

Паян вырмара тăрăшакансем ĕнер çеç вырльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçленĕрен хуçалăх ертӳçипе иртернĕ пирĕн сăмах унта та çитсе кайрĕ. Хуçалăхри уй-хир ĕçченĕсемпе механизациленĕ бригадăра вăй хуракансем кĕске хушăрах 300 тонна ытла утă, 2000 тонна сенаж янтăланă. Кунти ĕç хăвăртлăхне тата пахалăха çӳллĕ шайра тытассипе А. Бычков, Е. Ершов, А. Ивановпа И. Дмитриев, В. Васильев, Н. Ивановпа В. Степанов, В. Дмитриевпа Ю. Абросеев, В. Иванов, В. Федоров, А. Любимов, В. Борзаев водитель-механизаторсем активлă пулнă.

Тĕш тырă пухса кĕртес тапхăр пуçланчĕ пулин те, кооператив ĕçченĕсем каю ӳснине шута илсе выльăх апачĕ татах янтăлас ĕмĕтлĕ. «Хĕл кунĕсем нумай ыйтаççĕ. Паян юрласа кун иртерсен хĕлле пуç хыçмалла пулĕ», – терĕç тепĕр сехет е сехет çурăран урпа пуссине тухма хатĕрленнĕ механизаторсем хуçалăх ертӳçи енне кăмăллăн пăхса.

Вырма кунсерен вăй илнĕрен «хир карапĕсем» йышăннă каçалăксем те сарлакарах та сарлакарах. Çак ӳсĕмре хуçалăхра вăй хуракан кашни ĕçченĕн тӳпи пур. Çапла шутлать ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи Г. Иванова. Эпĕ çитнĕ чух Çĕньял Шурчари йĕтем çинче вăй хуракансем çанă тавăрсах ĕçе кӳлĕннĕччĕ.

– Черетлĕ вырма манăн хамăр хуçалăхри ĕç историйĕнче 46-мĕш. Хуçалăх ертӳçисемпе специалистсем те, уй-хир ĕçченĕсемпе механизатор-водительсем те паянхи ответлă ĕçре пĕр çыхăра пулни куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ тырă-пулă хирте юлмасса шантарать. Çав ĕмĕтпе хам та кулленех ĕçе тухатăп, – терĕ йĕтем çинчи ĕçсене пурнăçлама пулăшакан ĕç ветеранĕ Афанасий Васильев водитель **(сăн ӳкерчĕкре)**.



Килнĕ тырăна аласа типĕтес ĕçре усă куракан агрегатсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерессипе В. Ивановпа В. Бычков **(сăн ӳкерчĕкре)** тата Илья Михайловпа Валерий Кожевников машинистсем, хатĕр тырăна виçсе кĕлетсене ăсатассипе тимлекен А. Леонтьева весовщица яваплăха туйса ĕçлени те – пĕтĕмĕшле ăнăçăвăн никĕсĕ.

«Герой» хуçалăхра паян кашни ĕçчен кусĕнчех ăнса пулнă тырă тухăçĕпе тулли кăмăл хуçаланать. Йĕтем айĕнчи тирпейлĕх Шурчасем вырмана тăрăшса хатĕрленнине сăнлать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# «Хĕрлĕ автан» вырмашăн тус мар

**Çĕнĕ çăкăр тата пушар хăрушсăрлăхĕ**

Сарă тумлă тыр-пул кăмăллă чӳхенсе ларакан уйсенчи тулли пучахсем паян хресчене вырмана йыхравлаççĕ. Ыранхи куна пăхса пурăнакансем çак ответлă ĕçе кӳлĕнчĕç те ĕнтĕ. Йĕтемсем айне малтанхи çĕршер тонна çĕнĕ тырă пырса та выртрĕ. Вырма кунсерен вăй илсех пырать.

Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ тыр-пула çухатусемсĕр кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртесси – çĕр ĕçченĕшĕн чи ответлă тапхăр. Анчах çак хĕрӳ тапхăрта пушарсем сехре хăпартни тата вĕсем çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне самантрах пысăк сиен кӳме пултарни çинчен никамăн та манма юрамасть.

**ЯВАПЛĂХ**

Ответлă ĕç çире хире тухнă техника, тырă типĕтмелли агрегатсем, типĕтсе янтăланă утă-улăм, тырă склачĕсем çунса кĕлленнĕ тĕслĕхсем республикăра çулленех пулаççĕ. Çакă малашлăха пăхса тăрăшса ĕçлекен çĕр ĕçченĕшĕн – хăрушла ӳкерчĕк. Кунашкалли район территорийĕшĕн те ют мар. Хамăр енре пулнă пушарсене тишкерсен «хĕрлĕ автан» тухнин сăлтавĕсем çулленех пĕр евĕр сыхланса юлни пăшăрхантарать. Вĕсем: вырмара усă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни, ĕçе хутшăнакан техникăна хире тухиччен пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ комплектламанни, вырăнсенче çиçĕмрен хӳтĕленменни, электрооборудование юсавлă тытманни, тырă типĕтмелли агрегатсене температура датчикĕсемпе тивĕçтерменни (çак сăлтавпа çулленех тырă типĕтнĕ вăхăтра вуншар тонна тырă çунса кĕлете кĕреймест) тата ытти те. Çаксене курса-пĕлсе тăнă çинчех ял хуçалăх производство кооперативĕсенче тата продукци тирпейлекен предприятисенче вырмара пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ каланине-асăрхаттарнине шута хуманнине çулленех куратпăр, анчах... Кайран вара чавса çывăх та – çыртма çук.

**ТУМАННИНЕ ТУМАЛЛАХ**

Пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кĕрхи тыр-пул пуссисене вырмана тухрĕç те ĕнтĕ. Анчах çакă мĕн туса çитерейменнипе лăпланмаллине пĕлтермест. Пушар хăрушлăхĕ хĕрӳ ĕç çирен катара тăтăр тесен çĕр ĕçченĕн ĕнер туса çитерейменнине паян пурнăçлама тăрăшмалла. Тырă вырма хутшăнакансене – хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсене, механизаторĕсемпе рядовой ĕçченĕсене – паян манăн çакăн пек сĕнӳсем парас килет:

1. Ĕçе тухмалли ял хуçалăх техникине тата тырă типĕтмелли комплекссене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ хыççăн специалистсемпе ытти яваплă çынсенчен йĕркеленĕ комисси ятарлă актпа йышăнсан çеç ĕçе кĕртме юрать.

2. Вырмана хутшăнакан техникăна пушара хирĕç кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпе нормăпа палăртнă чухлĕ комплектламалла. Ку тĕллевпе кашни комбайн, машина-трактор, хирти е йĕтем çинчи агрегат çинче иккĕрен кая мар огнетушитель, икĕ кĕреçе, шăпăр, ятарлă ещĕкпе хăйăр, ятарлă шăнăçпа шыв пулмалла. «Хир карапĕсене» пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ чухлĕ комплектламанни хуçалăхсемшĕн уйрăмах хакла ларма пултарать.

3. Вырма тапхăрĕ тырăпа пĕрлех улăмпа та пуян. Çак тапхăрта ăна вăхăтра пуçтарса кĕртме те техника йышлă хутшăнать. Çавăнпа та ку ĕçе двигательсен глушителĕсем çине хĕм сӳнтерекен устройствăсем вырнаçтарман техникăна кăларасран асăрханмалла.

4. Хĕрӳ ĕç çине хутшăнакансемпе тăтăшах пушар хăрушсăрлăх правилисемпе инструктажсем иртермелле, вĕсене пушарпа пуçламăш самантра тĕрĕс кĕрешме вĕрентмелле.

5. Хиртен, улăх-çарантан пуçтарăнса кĕлете, капан-урана кĕнĕ тырă-пулă, утă-улăм упранакан вырăнсенче, складсемпе ампарсенче хурал тăратассине е сыхă пулассине йĕркелемелле.

6. Çĕнĕ тырă упранакан тата ăна тасатса-аласа типĕтекен вырăнсенче усă куракан электричествăпа ĕçлекен техника хатĕрĕсене вĕсемпе ĕçлеме çирĕплетнĕ çынсен ĕçе тĕплĕ тĕрĕслесе йышăнмалла. Ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх йĕркисене, пушар хăрушсăрлăх правилисене, ĕç технологине çирĕп пăхăнмалла. Акă иртнĕ çулсенче районти хуçалăхсенче тырă типĕтмелли агрегатсем юсавлă марринчен тухнă вут-çулăмра нумай тонна тырă юрăхсăра тухни, тырă типĕтмелли напольнăй сушилка юрăхсăрланни, хĕл валли янтăланă улăм кĕлленни асăрханулăха тивĕçлĕ шайра тытма хистет.

7. Вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинче хуралçăсем пулмалли пирки те манмалла мар. Кунта ĕçлекенсем валли пирус туртмалли ятарлă вырăн, алă айĕнчех хăйăрпа шыв, огнетушитель пулмалла.

Напольнăй сушилкăсем пирки çулленех асăрхаттарса тăратпăр, анчах чылай хуçалăхра вĕсене генераторсенчен кирпĕч стенапа уйăрмаççĕ, ГСМ юхнине «асăрхамаççĕ».

Йĕтемсем çинчен калаçнă май, кунти тепĕр çивĕч ыйту вăл – çиçĕмрен сыхланмалли устройствăсем çине çителĕксĕр тимлĕх уйăрни. Йĕтем çине илсе пынă тырăна вăхăтра типĕтсе ĕлкĕрейменнипе вăл хĕрсе каять, çакă аслати çапас хăрушлăха ӳстерет. Çавăнпа та унран сыхланмалли устройствăсене çук çĕрте кая юлмасăр лартмалла, юсавсăррисене юсамалла.

8. Вырмари тепĕр ответлă ĕç вăл – улăм пуçтарса тирпейлесси. Кунта та пушар хăрушсăрлăх правилисене тĕп вырăнта тытмасан инкек алăк умнех пырать. Унтан пăрăнас тесен типĕ улăм патĕнче пирус туртассинчен асăрханмалла, улмурисене пурне те пĕр çĕре вырнаçтармалла мар, вĕсене электропередача линийĕсенчен 15 метртан, çулсем хĕрринчен 20 метртан, çурт-йĕр таврашĕнчен 50 метртан инçерех вырнаçтармалла. Утă-улăм хранилищисен алăкĕсене вĕçĕмех хупă тытмалла.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçлени çеç çичĕ хут тар юхтарса ӳстернĕ тырă-пулăна тата утă-улăма çухатусемсĕр пухса кĕртме май парĕ.

**К. ПОПОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



# Пур çĕре те ĕлкĕрекен повар

**Килте те, уйра та пĕр ĕмĕтпе**



«Хырăм хыр тăрне кайсан ĕç пирки ан та шутла», – тетчĕ асанне килти хушма хуçалăх таврашĕнчи вăл е ку ĕçе кӳлĕнес умĕн е нумай ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн апатланма йыхăрса. Çичĕ теçетке пурăннăскерĕн сăмах тĕрĕслĕхне паян ăнланатăп: ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен.

Вун-вун çул ĕлĕкрех илтнĕ сăмахсене «Путь Ильича» агрофирмăна симĕс ĕç çи епле пынипе паллашма кайсан тепĕр хут илтрĕм. Ку хутĕнче унăн хуçи агрофирма поварĕ Раиса Ремнева **(сăн ӳкерчĕкре)** пулчĕ.

– Çĕр ĕçченĕшĕн чи хĕрӳ вăхăт халĕ. Уяр та ăшă кунсемпе тĕллевлĕ усă курса çак тапхăрта кашниех çитес хĕл кунĕсем валли ытлă-çитлĕ выльăх апачĕ янтăлассипе тăрăшать. Ыттисемпе пĕрле эпир те хамăр çемьепе кил курмасăр тенĕ пекех улăх-çаранта кун ирттеретпĕр, – терĕ типнĕ утăна преслакан механизаторсене хире тухса кăнтăр апачĕ çитернĕ Раиса Васильевна каçхи апат та пуласси не пĕлтерсе.

Агрофирмăра шăрăх та уяр кунсен кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Çакна ĕç кăтартăвĕсем те çирĕплетеççĕ. Нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксене çулса Шаптаксемпе Хорнуйсем утă уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне 650 тонна утă янтăлама та ĕлкĕрнĕ. Ку вăл çитес хĕл кунĕсем валли мĕн палăртнин 75 процентĕ. Ĕç хăвăртлăхĕ çапла пысăкки ăна пĕлсе йĕркеленинчен килнине А. Александровпа Е. Гаврилов механизаторсемпе пĕрлех тутлă апат ăсти те çирĕплетрĕ.

Апат ăсти тенĕрен. Раиса Васильевна ача чухнех тĕрлĕ апат-çимĕç ăсталама юратнă. Ашшĕ Василий Николаевич хăйне çу кунĕсенче окрошка, ытти чухне çĕр улми нимĕрĕ хатĕрлеме ыйтни тата хĕр пĕрчи хатĕрленĕ çимĕçе юратса çини çулпа мар, кунпа ӳсекен Райăна хавхалантарнă кăна. Çапла вара 1972 çулта Кашмашри 8 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă хĕре пурнăç çулĕ Шупашкарти поварсем хатĕрлекен училищĕне илсе çитерниннчен тĕлĕнме те кирлĕ мар пулĕ. Çавăнтанпа вăл повар!

Оринин ял тăрăхĕнчи Чамăш ялĕнче çемье çавăрнă хĕрарăм нумай çул хушши Мăн Сĕнтĕр районĕн Москакассинчи «Илем» кафере вăй хунă. Ĕçленĕ хушăрах 4 ывăлпа пĕр хĕр çуратса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Иккĕмĕш ывăлĕ Андрей паян «Путь Ильича» агрофирмăн Шаптакри сĕт комплексĕн ертӳçи пулса вăй хурать. Сăмах май, агрофирмăра Ремневсен династийĕ ĕçлет тесен те тĕрĕс. Мĕншĕн тесен курăк çулнă çĕрте ирттен пуçласа мĕн тĕттĕм пуличченех Раиса Васильевнăн мăшăрĕ Владимир МТЗ-82 тракторпа тимлесе тăрăшулăхĕпе ыттисене ырă тĕслĕх кăтартать. Утă çине тухиччен вара вăл çур аки уйĕсенче гебицид сапса çум курăкĕпе кĕрешессипе анлă ĕçсем пурнăçланă.

Ĕçчен çын ĕççĕр лараймасть. Ремневсем пирки те çавнах каламалла. Ĕç кунне пĕрлешӳллĕ хуçалăх аталанăвне хываканскерсем килти хушма хуçалăха тупăшлă тытса пырасси пирки те самантлăха та манмаççĕ.

– Епле манăн-ха килти хушма хуçалăха? Ял çыннишĕн вăл пурнăç никĕсĕ вĕт, ачасене тĕрĕс воспитани парса çул çине тăратмалли тĕп хăват. Çакна шута илсе эпир хамăрăн килти хушма хуçалăхра ĕне, икĕ вăкăр, чăх-чĕп, сыснасем, хур-кăвакал тытатпăр. Ку тăрăшулăх пирĕн çултан-çул вăй илет çеç, – терĕ хăй ĕçне пĕлнипе пĕрлех калаçма та ӳркенмен 7 мăнуклă повар.

Ĕçлекен çумне вара ĕçĕ те çыпăççах пырать. Кăçал çуркунне Оринин тăрăхĕнче «Супер хуняма» конкурс ирттерсен ĕçрен пăрăнман хĕрарăм кану каçĕнчен те катара юлман. Конкурса хутшăннă та – çĕнтернĕ, сысна çури выляса илнĕ. Пĕччен çурана тунсăх пулать тесе туслă çемье тепĕр çура туянать. Çапла вара килти хушма хуçалăхра сыснасем нĕриклетме пуçлаççĕ.

...Ремневсен килти хушма хуçалăхĕ пуян пулни мана савăнтарчĕ. Ĕç çумне ĕç çыпçăнать. Ĕçлекенĕн хуçалăхĕ тĕреклĕхпе палăрать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Повар сĕнĕвĕсем**

***Кĕр кунĕсем çитнĕ май килти хушма хуçалăхсенчи пахчасем тĕрлĕрен çимĕçпе пуянланчĕç. Хĕле хатĕрленнĕ май вĕсемпе усă курса паха çимĕç хатĕрлеме кил хуçи хĕрарăмĕсене çĕнĕ темиçе рецептпа паллаштарар-ха. Тен сирĕн урăхла сĕнӳсем пур? Çырса пĕлтерĕр. Пĕрлехи тăрăшулăхпа ăна та хаçат вулакансем патне çитерĕпĕр.***

**ДЫНЬĂРАН – КОМПОТ**

**Дыня кирлĕ. Пылак шыв валли 600 грамм сахăр, 1 литр шыв, кăштах лимон йӳçекĕ илмелле.**

Дыньăна хуппинчен, вăрринчен тасатмалла та тăваткал турамалла (5 см). Эмаль кастрюле шыв, сахăр, лимон йӳçекĕ хушса вĕретмелле. Унтан дыня ямалла та çулăм çинче 3 минут тытмалла. Дыньăна шывран кăлармалла, стерилизациленĕ банкăна хумалла. 3 литр банкине çур сехет стерилизацилемелле. Пылак шыва вĕретсе илмелле те банкăна ямалла. Тулнă банкăсене вĕри шыва чиксе кăларнă виткĕçпе хупламалла. Тепĕр майлă çавăрса лартса ăшă япалапа чĕркемелле. Вĕсене 2 – 3 кун тĕкĕнмелле мар.

**КАВĂНПА ХĂЯРТАН**

**Тăрăхла кавăн 2 кг, вĕтетнĕ укроппа пахча кĕпçи 2-шер апат кашăкĕ, çавăн чухлех теркăпа кăларнă ыхра, 2 апат кашăкĕ горчица, çур литр ӳсен-тăран çăвĕ, 1 стакан 9 процентлă уксус, 2 апат кашăкĕ вĕтетнĕ хура пăрăç,1 стакан сахăр, 2 апат кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

Хăярпа тăрăхла кавăна тăваткал турамалла та эмаль кастрюле хумалла. Унтан ешĕл пахча çимĕç, ыхра, ытти техĕмлĕх хушмалла, пăтратмалла, пĕр сехет лартмалла. Хатĕр салата 10 минут стерилизациленĕ çур литрлă банкăсене тултармалла.

**Пирĕн сĕнӳсем**

## Çĕнĕ çĕр улми

Çанталăк тимлĕхне пула кăçал çĕр улми тухăçĕ лайăххи халех курăнать. Çимĕç йышлă мар пулин те шултăра. Хăшĕсем çĕр улмие июлĕн 21-мĕшĕнче, Казански праçникĕнче, кăларса çиеççĕ. Теприсем вара – Илем кунĕнче, августăн 2-мĕшĕнче.

Çак çимĕçе ахальтен мар "иккĕмĕш çăкăр" тетпĕр. Ку чăннипех те çавăн пек. Вăл çын организмĕшĕн чи усăллă çимĕç тата куллен кирлĕ япаласен пуххи. 100 грамм йывăрăшлĕ çĕр улмире С витамин 20 мг. Унăн шайĕ вара вăхăт иртнĕçемĕн чакать. Асăрхатпăр вĕт, çур çултан çимĕç калăпăшĕ еплерех пĕчĕкленет, çакăнпа пĕрлех – витамин тытăмĕ те.

Шывра пĕçернĕ хупăллă çĕр улми чылай усăллă, пăспа пăшăхтарни ытларах та, апла пулин те уçланă çупа ăшаланă çимĕçех кăмăллатпăр. Çĕр улми уйрăмах халĕ, çамрăк вăхăтра, питĕ усăллă. Унтан чылай тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме пулать.

## Пахалăхлă пыл туянар-и?

Паллах, пахалăхлă пыл туянассинче пысăк вăрттăнлăх çук. Чи малтан вара ăна суйлассинче тимлĕх кирлĕ. Чечек пылĕ çутă тĕслĕ пулать, çăкаран пухни – янтарь тĕслĕ, хура тулран пуçтарни вара – тĕксĕм хăмăр.

Пахалăхлă пыл туянас тесен апат кашăкĕпе пыл илмелле, ун çине çăкăр тĕпренчĕкĕ ямалла. Лайăх пыл ăшĕнче çăкăр тĕпренчĕкĕ хытать. Пахалăхсăрри çинче вара вăл исленет. Ăна тĕрĕслеме вăхăт нумай та кирлĕ мар.

## Кавăн – усăллă çимĕç

Кавăн – усăллă пахча çимĕç. Ăна вăрăран лартнă хыççăн тепĕр 100 – 150 кунран татмалла пулса çитет. Ӳсме вара нӳрĕк нумай кирлĕ. Чечеке ларнă тата çимĕç тытăннă вăхăтра вăл çанталăк типĕ тăнине йывăррăн чăтать. Ăна валли пулăхлă тăпра кирлĕ. Кашни вунă тăваткал метр çине 50 килограмм чухлĕ тислĕк хывмалла.

Ӳсен-тăран çимĕçĕ маларах пулса çиттĕр тесен айккинчи туратсене татмалла, тĕп авăра кăна хăвармалла. Икĕ-виçĕ çимĕç чăмăртансан юлашки кавăн çумĕнче тăватă-пилĕк çулçă юлмалла, ытти вара кирлех те мар.

Кавăн тĕрлĕ витаминпа, тутлăхлă япалапа пуян. Вăл вар-хырăмра хăвăрт ирĕлет, чылай чиртен сипленме пулăшать. Организмри ытлашши холестерина пĕтерет, унăн вăрринче çу нумай. Кавăнран тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеççĕ.

## Ыхрапа сухан кăларар-и?

Умра август уйăхĕ, çавна май сад-пахчари çимĕçе пухса илессин хĕрӳ тапхăрĕ пырать. Халĕ иртнĕ кĕркунне лартса хăварнă суханпа ыхрана кăларма вăхăт, унсăрăн вĕсем тепĕр хут тымара кайма пултараççĕ. Çавăн пекех хăшĕсем çуркуннехи сухана та пухаççĕ ĕнтĕ.

Çимĕçе типĕ çанталăкра кăлармалла, хĕвел çинче типĕтмелле. Тунисене татса пăрахмалла та çумăр, нӳрĕк лекмен вырăна сарса хумалла е ярăмсем туса çакмалла.

Вăрлăх валли хăварнă пур ыхра пуçĕ те пулсах çитеймен-ха. Вĕсене кăкламалла та сулхăн вырăна хумалла, анчах та çулçине татса илме тăхтамалла.

Çапла вара çимĕçрен пушаннă йăрана касма та юрать. Кун пек тусан вăл канать тата çум курăкĕ те ытлашши алхасмасть. Халĕ вара çакăнта укроп, редиска е кивĕ сухан лартма та юрать. Ешĕл çимĕç чылайччен сирĕн сĕтел çинче пулĕ.

# Гранат пĕлтерĕшĕ пысăк

**Ыйтăр – ответлетпĕр**

**Паян магазин сентрисенче гранат нумай курма пулать. Эпир ачарах чухне ялта курăнман çимĕç вăл. Çавна май манăн ыйту çуралчĕ: мĕнрен усăллă-ши вăл тата унпа еплерех усă курни сывлăхшăн вырăнлăрах-ши?**

**И. КОЛБАСОВ.**
Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

***Вулавçă ыйтăвĕ хамăра та интересленерчĕ. Çавăнпа та ун çине хурав шыраса районти тĕп больницăна васкарăмăр. Шыракан тупать теççĕ. Эпир те участок медсестрипе Ирина КАЗАКОВĂПА тĕл пулсан И. Колбасова хумхантаракан ыйту çине тулли хурав илтĕмĕр. Ирина Анатольевна пире çапла каласа пачĕ:***

– Çапла, гранат – паян кашни апат-çимĕç магазинĕнчех тĕл пулакан çимĕç. Унăн усăллă енĕсем пирки хаçат вулакансем сахалрах пĕлни çыруран та курăнать. Гранатăн усси вара пысăк. Çавăнпа та ун пирки кăшт ытларах пĕлни никамшăн та сăтăр пулмасть.

Тĕрлĕ çĕр-шывсенчи ăсчахсем нумай ĕмĕрсем хушши граната тĕпчеççĕ. Паллă Авиценна та хăйĕн ĕçĕсенче тĕрлĕ сăлтавсемпе граната 150 хутчен аса илнĕ.

Израиль ăсчахĕсем гранатра антиоксидантсем ытти улма-çырларинчен самай нумайрах пулнине палăртнă. Çавна пулах гранат сĕткенĕ организма ирĕклĕ молекулсемпе кĕрешме пулăшать.

Экспертсем гранат çимĕçĕ сыпăсене сыхлама пулăшнине палăртаççĕ. Хĕвел тухăçĕнчи çĕр-шывсенче гранат пулăшнипе кирек епле чире те çĕнме май пурри пирки калани пур. Çавăнпах унта гранатпа усă курмалли халăх рецепчĕсем чылай.

Гранатăн сывлăх мелĕсем пирки калаçарха паян. Çакăн пирки малтанах авалхи Грецири Гиппократ тухтăр каланă. Гранат сĕткенĕпе вăл хырăм ыратнă чух, хуппипе – вар-хырăм пăсăлсан сипленме усă курнă. Авиценна вара гранат чечекĕсемпе юн кайсан, пыр ыратсан сипленĕ, ӳт температурине чакарнă.

Паян гранат сĕткенне аппетита лайăхлатма ĕçеççĕ. Вăл вар-хырăм ĕçне, япаласен ылмашăвне йĕркелет. Гранат сĕткенне анеми чухне, шăнса пăсăлсан тата инфекци чирĕсем канăçсăрлантарсан, атеросклероз аптăратсан сĕнеççĕ. Лайăх мар шыçăпа кĕрешме те гранат сĕткенĕнчен хăватлăраххи çук.

Гранатăн сывату вăйне çак çимĕçре марганец нумаййипе сăлтавлаççĕ. Çапла вара темиçе çул каялла гранат сĕткенне хуппипе вăрлăхне авăртса хатĕрленĕ çăнăхпа хутăштарса пиçсе кайнинчен эффективлă сиплемелли май та шыраса тупнă.

Гранат çулçисем бактерисемпе кĕрешес активлăхпа палăрнине пĕлсе вĕсемпе инфекци чирĕсемпе кĕрешме анлă усă кураççĕ. Çулçисенчен вĕретнĕ шыв – организма пĕтĕмĕшле тĕкĕ паракан эмел.

Гранатăн шаритленĕ вăррисем макпа хутăштарсан варвиттирен, бронхитран сывалма пулăшаççĕ.

**Ӳсен-тăран пирки**

# Сиенли те, усăлли те пур

***Халăхра вăй-хала пĕтерекен, кăмăлтуйăма пăсакан ӳсен-тăран, йывăç-курăк пур теççĕ. Эпĕ çакна хирĕçлеместĕп, анчах хăш ӳсен-тăранĕ мĕнлине пĕлместĕп. Тен вĕсем пирĕн килти пахчара та пур?***

**В. МАТВЕЕВА.**

Çынна е унăн энергетика шайлашăвне сиенлĕ витĕм кӳрекен ӳсен-тăран чăнах та пур. Вăйлă шăршă сараканнисемпе уйрăмах асăрхануллă пулмалла. Сирень, лантăш, лили, магноли... Вĕсен шăршисем ытларах пуçа ыраттараççĕ, ăша пăтратаççĕ, хăстараççĕ. Çавăнпа та çывăрмалли пӳлĕме, уйрăмах вырăнпа юнашар, çак чечексене лартма юрамасть. Мĕншĕн тесен каçпа вĕсем пӳлĕмри кислорода çăтса йӳçек газĕ кăлараççĕ.

Ăвăс – чăннипех те вампир темелле, анчах сиенĕ пуррипе пĕрлех вăл пуç ыратнине ирттерет, тĕрлĕ шыçăна сиплет. Усси пуррине пĕлсе тăрсах унăн сиплĕ пахалăхĕсене ытлашши пысăка хумалла мар. Чылай вăхăт ăвăспа юнашар тăрсан вăл вăй-хăвата туртса илме пултарать.

Тирек те çак ушкăнри йывăçах. Анчах та вăл сиенлĕ энергие тавралăхран, чĕр чунсенчен, этемрен хăй патне туртса илет. Çав вăхăтрах тирексем хушшинче пурăнакансем ытларах пуç ыратни пирки калаççĕ, шыçă чирĕсемпе аптăраççĕ.

Пирĕн тăрăхра анлă сарăлнă йывăçсенчен тепри вăл – юман. Ку йывăç патĕнче пулни кăмăла лайăхлатать, тĕрлĕ чиртен хăвăртрах сывалма пулăшать. Çак йывăçран хатĕрленĕ сĕтел-пукан çирĕп те вăрăм ĕмĕрлĕ пулнишĕн çеç мар хаклă. Ăна ырă витĕмĕшĕн пысăка хураççĕ.

Хыр – çынна лăплантаракан йывăç. Хырлăхра нумай вăхăт пулсан ӳслĕк иртет, сăмса юхма чарăнать.

Каштан ыйхă килменнине сирет тата хăранине ирттерет.

Кактус усал энергие çăтни паллă. Эсир пурăнакан вырăнта больница, морг пур пулсан, çывăхран пысăк вольтлă электролини иртет-тĕк – чӳрече умне кактус лартăр. Компьютер умĕнче те вăл шанчăклă сыхлавçă.

Туя тата кипарис килшĕн сиенлĕ. Çак ӳсен-тăрансен эрнергетики питĕ йывăр. Çавна май вĕсене пӳлĕмре çеç мар, çуртпа юнашар та ӳстерме юрамасть. Ахальтен мар вĕсене ĕлĕкрех вилĕмпе çыхăнтарнă.

Чӳрече умĕнче калча ӳстерекенсене пĕлме. Помидор та усал энергетикăллă ӳсен-тăран шутне кĕрет. Плющ (халăхра ăна арçынсене хăратакан чечек теççĕ) килтен арçынсене хăвалать: мăшăрсем уйрăлаççĕ, çитĕннĕ ывăлсем ашшĕ-амăш патĕнчен тухса каяççĕ.

**«Сад и огород» хаçатран.**

## Кадровый резерв

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 27 июля 2013 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненную и подписанную анкету по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

- копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;
- копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

е) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

ж) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 26 августа 2013 года включительно по рабочим дням) с 8 до 17 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, д. 34.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 69-8-07, эл. почта: mrgjunga_pos@cbx.ru, официальный сайт администрации Юнгинского сельского поселения.

**ВНИМАНИЮ ЖИТЕЛЕЙ СЕЛА МОРГАУШИ**

**В период с 1 апреля по 31 сентября 2013 г. СКИДКА на каждое окно Salamander 3000 руб.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТРАЖИ, БАЛКОННЫЕ РАМЫ, ПЕРЕГОРОДКИ**

**по минимальным ценам! Москитная сетка в подарок**

**Срок изготовления от 3 до 5 дней. Германское качество. Пенсионерам дополнительные скидки**

**ОКНА** сельский вариант от 3500 р. квартира от 5300 р.

**КОНДИЦИОНЕРЫ** от 13999 р. Продажа. Монтаж. Гарантия.

«ДАНИЛА-МАСТЕР» ул. 50 лет Октября, д. 6а (торговый центр «Универмаг», 2 этаж). Тел.: 8-927-667-34-38, (8352)37-34-38 3-5.

Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Техно-николь»; гипсокартон – 185 руб.; фанеру влагостойкую 9 мм; профнастил оцинк., профнастил крашеный; сухие смеси, цемент М-400, М-500; сайдинг; двери, поликарбонат, деревянная вагонка. Тел.: 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 2-10.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Требуется в ООО «Виктория плюс» бухгалтер. Требования: высшее образование, знание 1С 8.2. Приветствуется опыт работы в «Камин», Клиент-банк. Обязанности: ведение бухгалтерского учета в торговле. Условия: пятидневная рабочая неделя, полный рабочий день. Оклад - 10000 руб. Место работы: д. Ярославка Моргаушского района. Тел.: (8352) 446-448.**




**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА МОРГАУШСКИЙ РАЙОН**
**ГЛАВА КАДИКАСИНСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ**
**ПОСТАВНОЛЕНИЕ**

**17.07.2013 г. № 105**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17: 072501:1124 12 августа 2013 года в 10 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая д.1
2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Кадикасинского сельского поселения Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п.10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года «137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации» с учетом результатов публичных слушаний администрации района постановляю:

Изменить вид разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17: 072501:1124 из категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Кадикасинское сельское поселение, д. Карамалькасы, с разрешенного использования «для сельскохозяйственного производства» общей площадью 150 кв.м. на вид разрешенного использования «для строительства и эксплуатации магазина и мини-пекарни».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 12 августа 9-00 часов.

**Глава Кадикасинского сельского поселения Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 7-10.**

**ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ. Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 3-21.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 15-25.**

**Услуги буровой машины для бурения колодцев разного диаметра с доставкой и установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. Вячеслав. 5-10.**

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 9-20.**

**Бурение скважин на воду. Тел.: 37-44-15, 8-952-026-61-48.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352) 574281,573383, 8-903-358-36-23. 5-8.**

* * *

**Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 3-10.**

* * *

**Продаю: гравмассу; щебень гранитный, доломитовый, известковый; керамзит; бетон; торф; песок речной, карьерный. С доставкой. Недорого. Тел.: 8-927-668-70-15. 19-24.**

* * *

**Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 10-10.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15. 10-10.**

* * *

**Продаю ОПГС (гравмасса), песок. Тел.: 8-905-199-69-33. 9-19.**

* * *

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58. 8-10.**

* * *

**Продаются семена нового урожая озимой пшеницы, озимой ржи, 200 кг соломы в рулонах. Цена договорная. Тел.: 8-919-665-11-88.**

* * *

**Продам: сетку-рабицу – 600 р., столбы – 200 р., ворота – 3500 р., калитки – 1500 р., секции – 1200 р., профлист. Доставка бесплатная. Тел.: 8-916-140-47-78; 8-916-361-90-39. Продам кровати металлические – 1000 р., матрац, подушку, одеяло – 700 р. Доставка бесплатная. Тел.: 8-916-140-47-06. 3-10.**

* * *

**Срочно сниму (семья) квартиру в Моргаушах, желательно двухкомнатную, можно и однокомнатную. Тел.: 8-905-028-89-74.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-863-38-05.**

* * *

**Фермăра ĕçлеме сварщик, тĕрлĕ ĕç пурнăçлакансем, электрик, ĕне, качака сăвакан кирлĕ. Ĕç укçи вăхăтра тӳлетпĕр. Ĕç кĕнекипе йышăнатпăр. Кĕрекаç ялĕ. Тел.: 8-987-674-72-84. 5-5.**

* * *

**Тăваттă пăрулană хура ĕне сутатпăр. Тел.: 8-917-672-27-56, 8-937-372-76-86.**

* * *

**Июль уйăхĕнче пĕрремĕш пăрулană хура ĕне (пуçĕ шурă) тата хĕрлĕ-шурă тĕслĕ чупнă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-903-063-12-10.**

* * *

**Аттестат о среднем образовании Б-5664622, выданный Тойгильдинской средней общеобразовательной школой 19 июня 2003 года на имя Милютина Сергея Анатольевича, считать недействительным.**

* * *

**Закупаю бычков, овец, молочных телят. Тел.: 8-905-343-46-23. 1-10.**

* * *

**На постоянную работу в «ШВЕЙНУЮ МАСТЕРСКУЮ» в с. Б. Сундырь требуются швеи (на спецовку). Заработная плата от 8000 руб. Оформление по ТК РФ. График работы – Пн-Пт., с 8-00 час. до 17.00 час. Тел.: 8-905-345-58-13. 2-2.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-853-19-14.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру площадью 41 кв. м. Тел.: 8-905-347-58-15.**

* * *

**Хура тĕслĕ иккĕмĕш пăруламалли лайăх ăратăри сĕтлĕ ĕне тата хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-909-303-11-32.**

* * *

**Продаю дом с надворными постройками в д. Ятманкино. Свет, газ, отопление, вода – подведены, плодоносящий сад, асфальт до дома. Тел.: 8-927-857-48-90.**

* * *

**Продаю ячмень по цене 9 руб. 90 коп. за 1 кг, фураж (овес+ячмень) в чистом виде, цена 9 руб. за 1 кг. Тел.: 8-937-013-71-99.**

**БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 25-43.**

**ТЦ «ЛОТОС» реализует: цемент – 180 р., профнастил окраш. 213 руб. кв. м., оцинкован. 171 руб. кв. м., трубы б/у для столбов 127 р. пог. м., профиль 20х20, 40х20, 40х40, поликарбонат тепличный – 1500 р., утеплители, сайдинг, двери стальн. и межкомн. Доставка. Заявка по тел.: 8-917-665-27-26, 48-33-46. 10-10.**

**ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40. 25-43.**

**МОСКВА – ВАХТА!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 4-4.

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 12-22.**

**Срочно! Вахта в Москву и МО:**
**– фасовщицы-упаковщицы**
**– грузчики-комплектовщики**
**Жилье, питание, транспорт – Бесплатное. З/п 27 000-35 000** 5-5.
**Тел: 8(8352)36-03-32, 36-42-92.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.**

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.:8-905-340-07-78. 3-10.**




## Прогноз погоды

| | суббота 27 июля | | | | воскресенье 28 июля | | | | понедельник 29 июля | | | | вторник 30 июля | | | | среда 31 июля | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +12 | +19 | +18 | +14 | +15 | +18 | +23 | +17 | +17 | +19 | +21 | +17 | +16 | +21 | +23 | +18 | +16 | +22 | +25 |
| Давление мм | 735 | 736 | 737 | 738 | 738 | 739 | 739 | 740 | 739 | 738 | 737 | 739 | 740 | 741 | 740 | 741 | 740 | 740 | 739 |
| Влажность % | 91 | 74 | 78 | 92 | 95 | 85 | 63 | 79 | 93 | 92 | 80 | 84 | 94 | 79 | 64 | 84 | 94 | 70 | 53 |
| Ветер м/сек | 2 | 3 | 4 | 3 | 2 | 3 | 3 | 3 | 3 | 5 | 6 | 4 | 3 | 6 | 5 | 3 | 2 | 3 | 3 |
| | С-В | В | С-В | С | С | С | С | С-З | С-З | С | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 04:49 | 21:09 | | | 04:50 | 21:07 | | | 04:52 | 21:05 | | | 04:54 | 21:04 | | 04:56 | 21:02 | |
| Луна восход / заход | | 22:28 | 11:17 | | | 22:49 | 12:32 | | | 23:13 | 13:45 | | | 23:41 | 14:53 | | - | 15:57 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 26.07.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4582.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.